27-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1944 АВГУСТ 15 ЫТЛАРИКУН 160(6655) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Арми генералне ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мěш фронт çарěсем, малалла тапăнса пырса, паян, августăн 14-мěшěнче, ОСОВЕЦ хулипе крепоçне — нимěçсен БОБР шывě çинчи оборонин хăватлăн тěреклетнě районне, Хěвелтухăç Пруссы чиккисем патне пымалли вырăнсене хўтěлесе тăраканскерне,—штурмласа туртса илнě.

ОСОВЕЦ хулипе крепоçне туртса илессишěн çапăçнă чухне БОЛДИН генерал-полковникăн, ГРИШИН генерал-лейтенантăн, ЗАХАРОВ генерал-майорăн, КАЗАК полковникăн, ФОДОТОВ полковникăн, ГАСПАРЯН генерал-майорăн, ДАЛМАТОВ генерал-майорăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, КРАСНОШТАНОВ генерал-майорăн, СУПРУНОВ полковникăн, КИРИЛЛОВ генерал-майорăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорăн, ШКРЫЛЕВ генерал-майорăн, АРТЕМЬЕВ полковникăн çарěсем; артиллери генерал-лейтенанчěн СОКОЛЬСКИЙĚН, артиллери генерал-майорěн ДЕГТЯРЕВĂН, артиллери генерал-майорěн КАРЕПИНĂН, артиллери генерал-майорěн ВАСИЛЬЕВĂН, ЕЛКИН полковникăн, ЗЯБЛИКОВ полковникăн, КОРОЛЕВ полковникăн, КОРОТКИХ полковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн артиллерисчěсем; танкевăй çарсен генерал-майорěн ШИРОБОКОВĂН, ШМЫРОВ полковникăн, РОДИОНОВ полковникăн, КОЗИКОВ полковникăн танкисчěсем; авиаци генерал-полковникěн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчěн ОСИПЕНКĂН, авиаци генерал-майорěн БАЙДУКОВĂН, ЯКУШИН полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ГРИШЕНКО полковникăн, ПОКАЕВА полковникăн, РУБЦОВ майорăн летчикěсем; инженери çарěсен генерал-майорěн БЛАГОСЛАВОВĂН, МЕЛЬНИКОВ полковникăн, ТРЕТЬЯКОВ полковникăн, ВИЗИРОВ полковникăн, ЛОГИНОВ полковникăн, МИРОТВОРСКИЙ полковникăн, ПЕТРОВ майорăн саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-майорěн БОРЗОВĂН, ТЕЙКОВЦЕВ полковникăн, çыхăну çарěсен генерал-майорěн НОВАРЧУКАН связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве яланлăха палăртса хăварас тесе, ОСОВЕЦ хулипе крепоçне туртса илессишěн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ОСОВЕЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 14-мěшěнче, 22 сехетре хамăр Тăван çěршывăн столици МУСКАВ, çěр çирěм тăватă тупăпа вуникě хут пěр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 2-мěш фронтăн паттăр çарěсене, ОСОВЕЦ хулипе крепоçне тытса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОСОВЕЦА ирěке кăларассишěн çапăçнă çěрте пулнăскерсене, пите чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 14-мěшě.

Совет Информаци Бюровěнчен

АВГУСТĂН 12-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ПСКОВ хулинчен хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшмана çапăçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнě, вăл шутра — МОЛОЖВА, ЛЯДИНА, САТСЕРИ, ЛЕПАССАРЕ, ТАБИНА, ВАСТСЕЛИИНА, САЙКА, РЕСТУ, ВИЛЛА, ПЛАНИ, ЛЕММАТСИ ятлă пысăк ялсем тата ЛЕПАССАРЕ ятлă чугун çул станцийě.

ЯКОБСТПИЛС хулинчен хěвеланăçнерехре (Хěвеланăç Двина шывě çинче) пирěн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнě, вăл шутра — РИКШАНИ, РИЗГАС, МУРИЕКИ, ГАИЛЫШИ, МЕЖМАЛИ, БРАКНЭС, ВИМРАС, ДАУДЗЕСЕ ятлă пысăк ялсем тата СЕРПИЛС, СТОБУРГЕ, СЕЦЕ ятлă чугун çул станцийěсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем АУЦЕ хулипе чугун çул станцине туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЭГЛИТЭС, ЯУНПИЛС, ЗЕБРАС, ИЛЕС, БИЛЕКЯЙ, СУГИНЧАЙ ятлă пысăк ялсем тата БЕРЗУПЕ, БИКСТЫ ятлă чугун çул станцийěсем.

БЕЛОСТОК хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата хěвеланăçнерехре пирěн çарсем, наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнě, вăл шутра — КЛЕВЯНКА, МИЛЕВО, ТЮЦАННЕ, НОВАВЕСЬ, ШАФРАНКИ, ЛАЗЫ, КРЫТУЛЫ, ВНОРЫ-СТАРЕ, СОКОЛЫ, ФАШИ, ВРУБЛИ ятлă пысăк ялсем тата МОНЬКИ, ВНОРЫ ятлă чугун çул станцийěсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен çурçěртерехре тата çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 250 пункта ытла туртса илнě, вăл шутра — МАТЬКОВЕНТА, ДОМБРОВКА КООТЕЛЬНАЯ, ПЕНТКИ, ТЫМЯНКИ, НУР, ОЛЕХНЫ, КУТАСКИ, ЛИПКИ, СТОЧЕК, ДОМБРОВА, МЫЩАДЛА, КОСЕНЖИКИ, ВУЛЬКА ДОМБРОВИЦКА ятлă пысăк ялсем тата ШЕПЕТОВО ятлă чугун çул станцийě.

САНДОМИР хулинчен хěвеланăçнерехре, ВИСЛА шывěн сулахай хěрринчи плацдармра, тăшман пехотипе танкěсен пысăк вăйěсем тунă контратакăсене ăнăçлăн сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 11-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 71 танкне çěмěрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ўкернě.

АВГУСТĂН 13-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 13-мěшěнче пирěн çарсем ПСКОВ хулинчен хěвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, Эстони ССР-ěн уезд центрне ВЫРУ хулине штурмласа туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — САХОДИ, ВЯЙКЕ, МАДАЛА, СОКЮЛА, ПАЛУМЕТСА, РАУДОЕПА, РЫУГЕ ятлă пысăк ялсем тата ОТСА, НЫПОВА, ВЫРУ ятлă чугун çул станцийěсем.

РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем, тăшман хирěç тăнине çěмěрсе тăкса, Латви ССР-ěн уезд центрне МАДОНА хулипе чугун çул узелне туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БИКСЕРИ, РЕТИ, БУЛЫНИ, ЦИСКАНЫ, ЛАЗДОНА, АРИКИ, РАНКЕ, ТЕПШИ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОСТОК хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнě, вăл шутра — ГОНЕНДЗ хули, ДОВНАРЫ, КУЛЕШЕ, БЖЕЗИНЫ, ГЕЛЧИН, МЕНЖЕНИН, ВЫСОКИЙ, МАЗОВЕЦК ятлă пысăк ялсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен çурçěртерехре тата çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнě, вăл шутра — ДРЕВНОВО-ГОЛЫНЬ, БОГУТЫ, КАМЕНЬЧИК-ВЕЛЬКИЙ, ВУЮВКА, СУЛЕЮВ, КУРЫ, ФРАНЦИШКУВ, МОСТУВКА ятлă пысăк ялсем.

САНДОМИР хулинчен хěвеланăçнерехре, ВИСЛА шывěн сулахай хěрринчи плацдармра, пирěн çарсем тăшман пехотипе танкěсен контратакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 12-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 75 танкне çěмěрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ўкернě.

☆ ☆ ☆

Псков хулинчен хěвеланăçнерехре пěр соединени чаçěсем, тăшман оборонин Пиуза (Пимжа) шывěн сулахай хěрринче выртакан тăрăхне çěмěрсе тăкса, 15 километр малалла кайнă та Выру хулипе чугун çул станцине туртса илнě. Тепěр участокра совет боецěсем хаяр тытăçу хыççăн çулсен Рыуге ятлă узелне туртса илнě. Тăшманăн пěр пин салтакěпе офицерне ытла пěтерсе тăкнă. Хăй тěллěн çўрекен 6 тупă, 65 хир туппипе танксене пемелли тупă, 16 миномет, 875 винтовкăпа автомат тытса илнě. 157 нимěç салтакěпе офицерне тыткăна илнě. Пěр чаçри подразделенисем малалла çав тери хăвăрт кайнă та нимěçсен 802-мěш моторизованнăй артиллери полкěн штабне аркатса тăкнă. Трофейсем тытса илнě. Тыткăна илнисем пур.

Пирěн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимěçсен 8 самолетне персе ўкернě тата зенитнăй артиллери тăшманăн 4 самолетне пěтерсе тăкнă.

* * *

Резекне хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман кунта малтанах оборона позицийěсем туса хатěрленě. Çав позицисем Мадона хули тавра çур ункă пек выртнă. Тăшман хытă хирěç тăнă. Пěр соединени чаçěсем çавăрса илмелли маневр тунă та тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, Мадона хулипе Рига хушшинчи шоссе çулне татнă. Çав вăхăтрах пирěн тепěр соединени Мадона хулинчен кăнтăр-хěвелтухăçнерехре тăшман оборонине татнă та, нимěçсене хěстерсе пырса, Лаздона ятлă çирěплетнě местечкăна туртса илнě, çак местечко Мадона хулине кăнтăр-хěвелтухăç енчен хўтěлесе тăнă. Пирěн кăнтăртарахра кěрешекен ытти чаçсем тăшманăн артиллерипе миномечěсен хăватлă вут-çулăмě витěр тухса малалла куçнă та Мадона хулипе Плявинас хули хушшинчи чугун çула татнă. Пирěн çарсем тăшмана çавăрса илмелли маневр тунă та çав тери хăвăрт атакăланă, тăшмана Мадона хулинчен хăваласа кăларнă. Пилěк танкпа хăй тěллěн çўрекен тупă, 34 хир туппи, 86 пулемет, 6 радиостанци, боеприпаспа çар пурлăхěн 5 складне тытса илнě. Тыткăна нумай илнě.

* * *

Белосток хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре тата хěвеланăçнерехре пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Осовец крепоçне пырса кěмелли çулсене хўтěлесе тăракан Гонендз хули патěнче хаяр çапăçусем пулса иртнě. Пирěн чаçсем хěвелтухăç енчен суя атака пуçласа янă та хайсен тěп вăйěсемпе Гонендз хулине кăнтăр енчен çавăрса илнě, хула тулашне вăркăнса кěрсе кайнă. Урамсенче вăйлă çапăçнă хыççăн пирěн чаçсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă, Гонендз хулине йышăннă. Менженин ялě районěнче нимěçсем темиçе хутчен те питě хаяр контратакăсем тунă. Совет боецěсем тăшман хирěç тănине çěмěрсе тăкнă та шоссе çулěсен паха узелне Менженин ялне туртса илнě. 800 гитлеровеца вěлерсе пěтерне, хăй тěллěн çўрекен 8 тупă пěтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнě. Тыткăна илнисем пур.

Пирěн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимěçсен 11 самолетне персе ўкернě.

* * *

Седлец хулинчен çурçěртерехре пěр соединени чаçěсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнě. 400 нимěç салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Седлец хулинчен çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем, тăшман хаяррăн хирěç тăнине çěмěрсе тăкса, Варшавăран 20 километр çурçěр-хěвелтухăçнерехри Мостувка ялне туртса илнě. Нимěçсен танкěсемпе пехоти темиçе хут та контратака тунă, анчах та вăл атакăсене пурне те сирсе янă. Эсэсовецсен «Герман Геринг» дивизийěнче тăнă нимěç салтакěсемпе офицерěсен 500 вилли çапăçу хирěнче выртса юлнă. Пирěн боецсем 4 танк, 16 тупă, 22 пулемет тытса илнě.

* * *

Сандомир хулинчен хěвеланăçнерехре тăшман паян ирхине пирěн Висла шывěн сулахай хěрринчи плацдарма йышăнса тăракан çарсене хирěç çěнěрен контратакăсем пуçласа янă. Нимěçсем, совет оборонин начар хўтěлекен вырăнне шыраса тупма, пирěн чаçсене пайлама тăрăшса, тěрлě енчен пыра-пыра çапнă. Кунěпех хаяр çапăçусем пынă. Пěр участокра тăшман пирěн позицисем патне çывхарса çитнě. Вара çак нимěçсем çине пирěн артиллери çил-тăвăллăн пеме пуçланă. Çапăçу хирěнче нимěçсен темиçе çěр салтакěпе офицерě вилсе е аманса выртса юлнă, гитлеровецсен ирěксěрех каялла чакма лекнě. Тăшмантан 3 юсавлă танк тата 5 бронетранспортер тытса илнě. Тепěр участокра пирěн пехотинецсем, артиллеристсем тата танкистсем тăшманăн 10 контратакине ытла сирсе янă, тăшман пехотин икě батальонне пěтерсе тăкнă, нимěçсен 35 танкне çунтарса янă е персе çěмěрнě.

Совет летчикěсем сывлăшра тăшман самолечěсемпе ăнăçлăн çапăçнă. Нимěçсен 25 бомбардировщикěпе истребительне персе ўкернě.

Тырă вырнипе пěрлех, кěлте кўрсе капана хывас тата авăн çапас ěççене вăйлатар

Елчěк районě ыраш вырса пěтернě

ЕЛЧĚК, августăн 14-мěшě. (Телефонпа). Юлашки кунсенче уяр тăнă çанталăкпа анлăн усă курса, районри колхозсем ěнерхи кун тěлне ыраш вырса пěтерчěç. Пурě 12.546 гектар çинчи тырра вырса пухнă. Çуртыррисене 2.465 гектар вырнă. Районра малта пыракан колхозсем пучахлă тырăсене вырса пěтерессě ěнтě. Паянхи кун тěлне Ворошилов ячěпе тăракан колхоз, «Осоавиахим», «Марс», «КИМ» колхозсем тулă, сěлě, пăри тата пăрça йышши тырăсене вырса пěтернě. Тырă вырас ěçре комбайнер Указов юлташ аван ěçлет. Вăл юлашки 3—4 кунра 80 гектар ытла вырнă.

Тырă вырассипе пěрлех ыраш акас ěç те сарăлса пырать; паянхи кун тěлне районěпе 2.215 гектар акнă. Пур колхозсенче те сеялкăсемпе анлă усă курассě.

В. МАРКОВ,
Райçěрěç пайěн заведующийě.

47 колхоз ыраш вырса пěтернě

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 14-мěшě. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри 47 колхоз ыраш вырса пěтерчěç. Иртнě çулсенче юлса пынă «Жнейка», «Красноармеец», «Çěнě ял» тата Молотов ячěпе тăракан колхозсем кăçал тырă вырассипе мала тухрěç. «Жнейка» колхоз пучахлă тата пăрça йышши культурăсене пěтěмпех вырса пěтернě, кайран акнă 25 гектар сěлě çеç юлнă. Халě колхоз вырнă тырăсене капана хывать тата авăн çапма тытăнчě.

Колхозсем ыраш акма тытăнчěç. Районěпе паянхи кун тěлне 628 гектар ыраш акнă. «Жнейка» колхозра ыраш акнă çěрте подростоксем аван ěçлеççě, кашни кунах нормăна 120—125 процент тултараççě. Анчах та хăшпěр колхозсенче ыраша алăпа акаççě. Сăмахран, Буденный ячěпе тăракан колхозăн сеялкăсем пур, апла пулин те кунта алăпа акаççě.

Тырă вырас тата ыраш акас ěçре Мартынкасси ялсоветне кěрекен колхозсем ытла та юлса пыраççě. Кунта уйрăм сдельщинăпа ěçлемеççě, машинăсемпе тěрěс усă курмаççě. Çак вăхăта çитсе те колхозниксемпе колхозницăсене СССР Совнаркомěпе ВКП(б) Центральный Комитечě «Тырпул пухса кěртесси тата ялхуçалăх продукчěсене хатěрлесси çинчен» йышăннă постановление тěплěн ăнлантарса паман.

„Красный партизан“ колхоз малта пырать

ШАХАСАН, августăн 14-мěшě. (Телефонпа). «Красный партизан» колхозра кăçал тырă вырма тухсан малтанхи кунранах уйрăм сдельщинăпа ěçлерěç. Çавна май ыраш вырассине 5 кунра вěçлерěç. Нумай колхозниксем ěç нормине икě хут ытла тултарса пычěç. Ыраш вырса пěтернě хыççăнах государствăна тырă леçме тытăнчěç, пурě 120 центнер леçнě те ěнтě.

Августăн 10-мěшěнче колхоз ыраш акма тухрě, ыран ыраш акса пěтереççě. Вырнă тырăсен 85 процентне капана хывнă. Кěлте турттаракан А. Александрова, П. Кириллова юлташсем кунне 14—15 лав турттараççě.

Колхозра ěç тухăçлăхě лайăххи чăн малтанах массăллă-политикăллă ěçе аван тунинчен килет. Колхоз председателě И. Васильев юлташ — хăех агитколлектив руководителě. Тырă вырма тытăннăранпа кунта агитаторсем 16 калаçу ирттернě, икě доклад туса панă. Колхозра кунне 3 хутчен вěри апат çитереççě. Апат çинě чухне агитаторсем колхозниксене хаçатсем вуласа параççě, çěнě хыпарсене пěлтереççě. Кашни бригадăрах «Боевой листоксем» тухаççě. Колхоз правленийě çумěнче тухакан хаçат та 8 номер тухнă. Колхозниксемпе колхозницăсем халě аван çапас, государствăна тырă парас тěлěшпе пикенсе ěçлеççě.

В. ВЕСЕЛОВ.

Хирте пěр пучах та юлмасть

Ямбахри «Майăн 1-мěшě» колхозран инçех мар вăрăм хăмăллă ыраш хушшинче колхозниксен пуçěсем кăшт-кашт курăнкаласа илеççě те каллех куçран çухалаççě. Ку вырăнта колхозри иккěмěш звенон колхозникěсем юлашки кун ыраш вырaççě.

Колхоз председателě ěç пахалăхне кашни ир, кăнтăрла тата каç пулас умěн хăй тěрěслет. Çитменлěхсене палăртать. Колхоз председателěн заместителě О. Ананьев юлташ та уйхиртен сахал вăхăтсенче çеç правленине каять. Унта та нумай тăмасть, кěтўсем çўренě вырăна та кайса килет.

Виççěмěш бригадăри пěрремěш звено ěçленě çěре пытăмăр. Ěçěн пахалăхě аван. Колхозниксем кашни пучаха пуçтарса пыма ěлкěрнě.

Ананьев юлташ пěр метр лаптăк виçсе илчě те:

— Шутласа пăхар-ха, пěр тăваткал метр çинче миçе пучах юлнă? — терě. Пěр пěрчě те, пěр пучах та тупмарăмăр. Унтан Ананьев тепěр тěлтен пěр лаптăк виçсе илчě. Ку 57 çулхи Анастасия Петрова колхозница вырнă участок пулнă. Пěр пучах та çук. Карчăкăн ěçчен алли ěçе çав тери тěплě тунă. Вăл çěмелěсене те тирпейлě тунă.

Иккěмěш звенора та ěç пахалăхě начар мар. Ку звенори колхозницăсем те таса вырнă. Кашни колхозница тенě пекех хăйсен нормисене тултарса пыраççě.

Колхозра 12—14 çулхи подростоксем 11 ача, 60—70 çулхи карчăксемпе старыксем 7 çын. Вěсем пурте ěçлеме тухаççě. Дария Литрова 68 çула çитнě ěнтě. Ěçлес енěпе çамрăксенчен пěрре те юлмасть. Çамрăк ачасем те хăйсен нормине ирттерсе тултараççě. С. Григорьева 14 çулта. Унăн ěç норми çитěннисенчен каярах, анчах вăл вěсемпе тан—0,10 гектар вырса пынă. Кăçал вăл 100 ěçкунě тунă.

Иртнě çулта колхоз кашни гектартан 11 центнер тырпул туса илнě. Колхозниксем кăçал ытларах тырă илес тесе, тырăн кашни пěрчине амбара кěртессишěн пěрпěринпе ăмăртса ěçлеççě.

Колхозра транспорт хатěрěсене ытлăн-çитлěн туса хунă. Кăçал тырă вырма тухиччен 10 стан урапа çěнěрен туяннă, икě бестарка, 88 михě хатěрленě. Тырра таса амбарсене хураççě. Халě колхозра тырăсене капана хываççě, авăн çапаççě. Государствăна тырă памалли плана колхоз 50 процент тултарнă. Тырă леçме кулленех 5 лав çўрет. Колхоз ыраш акма августăн 10-мěшěнче тытăннă. Ăна пěтěмпех машинăпа акаççě.

— Пирěн колхозниксем фронтри боецсем пек ěçлеççě. Тухăçлă ěçлеççě те лайăх пурăнаççě. Çак çулта Наталия Степанова, Дария Иванова, Серафима Константинова колхозницăсем çěнě пўрт, 4 хуçалăх мунча лартрěç. Колхозниксен пěрин те государство умěнче парăм çук. Эпир пěтěм тырра сентябрěн юлашки кунěсенче çапса пěтерме шутлатпăр, — тет колхоз председателě Александров юлташ.

С. ШАДИН.

Чурачăк, Ямбахри «Майăн 1-мěшě» колхоз.

Ик-виçшер норма тултарса ěçлеççě

ЕЛЧĚК. Çěнě Пăвари «Сатурн» колхозра тырă вырасси пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Тырă вырнă çěрте колхозниксем пěр-пěринпе ăмăртса ěçлеççě. Чылайěш колхозниксемпе колхозницăсем кулленхи нормăна ик-виç хут ирттерсе тултараççě.

Уйрăмăнах тырă вырнă çěрте фронтовиксен çемьисем лайăх ěçленине палăртмалла. Фронтовик ашшě Купташкин Дорофей 65 çулта ěнтě. Вăл кашни кун 0,10 гектар вырас вырăнне 0,22—0,25 гектар вырать. Çавăн пекех фронтовик арăмěсем Краснова Елизавета, Никитина Александра, Максимова Галя, Митрофанова Ольга кулленех 0,25—0,30 гектар выраççě.

Колхозра пěрлешўллě столовăй тата ачасен ясли организациленě. Агитаторсем колхозниксене тěнчери лару-тăрупа тата Совинформбюро пěлтерěвěсемпе паллаштараççě.

В. НАУМОВ.
«Сатурн» колхоз председателěн заместителě.

Уйхир стахановецěсем

КАНАШ. Кивě Ахпуртри Калинин ячěпе тăракан колхозăн уйхирěсенче кăçал вăйлă тырă çитěнчě. Колхозниксемпе колхозницăсем ылттăн пек тырра пěр тăккаламасăр пухса кěртессишěн ывăнма пěлмесěр ěçлеççě, нумайěшě кулленхи нормăна ытлашшипех тултараççě. Тěслěхрен, Никитина, Михайлова, Иванова, Николаева, Тихонова юлташсем кашни кунах нормăна 160—170 процент тултараççě.

С. КАШИН.

КАЛИНИНО. Уйкас Явăшри Калинин ячěпе тăракан колхозра пур тырăсем те пиçсе çитрěç. Çак колхозри 3-мěш бригада ыраш вырнă вăхăтрах 30 гектар урпа вырса çěмеле хыврě. Нумай колхозниксем стахановла ěçлеççě. Е. Антонова, В. Волкова, О. Казакова юлташсем кашни кунах нормăна икě хут ытла тултараççě, кунне 0,20—0,23 гектар выраççě.

Д. ПЕТРОВ.

Государствăна ялхуçалăх продукчěсем параççě

ЙĚПРЕÇ. «Оборона» колхоз августăн 2-мěшěнче государствăна 12 пăт хăяр, 2 лав кишěр леçсе панă. Пахча-çимěç туса илес тěлěшпе ěçлекен бригадир Николай Мустяков Хěрлě Çара валли çитеклě таран пахча-çимěç парса тăрассишěн вăя хурса ěçлет. Вăл ку тěлěшпе кěске вăхăтрах плана тултарма пулчě.

ВЫЛЬĂХ-ЧĚРЛĚХ ĚРЧЕТЕС ĚÇЕ ХАКЛАМАН КОЛХОЗРА

МУРКАШ. Тельман ячěпе тăракан колхоз обществăллă выльăх-чěрлěх ěрчетес енěпе ытла та çителěксěр ěçлет. Кěсресемпе ěнесене чуптарас плана 50 процент кăна пурнăçланă.

Выльăх-чěрлěх ěрчетмелли плана тултарман. Лашасем планпа пăхниччен 4 пуç, ěнесем 15 пуç сахалтарах, сурăхсем те 80 пуç вырăнне 43 пуç çеç. Кунпа пěрлех выльăх-чěрлěх тухăçлăхне ўстерес тěлěшпе те ěçлемеççě. Сěтпе çăмарта илмелли плана тултарман.

Выльăх-чěрлěхе хěл каçарма апат, çуртйěр хатěрлессипе сахал интересленеççě. Утă çулса пухнисěр пуçне урăх нимěнле апат та хатěрлемен. Силос хывмалли плана тултарман. Выльăх-чěрлěх витисем çěмěрěлсе пěтнě.

Колхоз председателě И. Егоров тата фермăсен заведующийě С. Виссарионов ответлăха туйса ěçлемеççě. Вěсем выльăх-чěрлěх ěрчетессине манăçа хăварнă. Правленин ларăвěнче те ку ыйту пирки пачах каласман.

Я. СИГАЙ.

Укерчěк çинче: Вăрнар райçěрěç пайěн главнăй агрономě И. А. Данилов юлташ. Вăл 1928 çултанпа агроном пулса ěçлет. Вăрнар районěнче 10 çул ěçлет ěнтě. Вăл пулăшнипе районри колхозсем агротехника ěçěсене лайăх пурнăçласа пыраççě.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ТУМАЛЛИ ĚÇСЕН ПЛАННЕ 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 10-МЕШĚ ТĚЛНЕ МĚН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

МТС-сем	Тракторсемпе ěçленě (сухалани çине куçарса)
Вăрнар	100,3
Йěпреç	93,5
Куславкка	85,0
Шăхасан	82,3
Чкаловски	77,2
Çěрпў	74,0
Елчěк	72,8
Красноармейски	71,7
Калинино	68,2
Тăвай	68,0
Комсомольски	64,7
Çěмěрле	61,1
Вăрмар	60,6
Ишлей	57,2
Сурмайдан	53,5
Сěнтěр	52,4
Сěнтěрвăрри	52,1
Хěрлě Чутай	50,0
Шупашкар	49,5
Пăрачкав	48,5
Етěрне	48,3
Улатăр	48,1
Первомайски	46,7
Канаш	46,4
Элěк	46,1
Октябрьски	45,0
Кожевенски	40,3
Шăмăршă	39,3

Кок-сагыз тымарěсене пěр çухатмасăр пухса кěртмелле

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри чылай колхозсем кок-сагыз акса тăвас тěлěшпе кăçал начар мар ěçлерěç. «Родина» колхозра 50 килограмм, «Красное Батырево» колхозра 24 килограмм, «Путь Ленина» колхозра 22 килограмм кок-сагыз вăрлăхě пухса илчěç. Сталин ячěпе тăракан колхоз 8 гектар çинчен 10 центнер, «Гвардеец» колхоз 16 гектар çинчен 16 центнер кок-сагыз тымарě кăларса «Растказучук» складне леçсе пачěç.

Анчах çакăнпа пěрлех кок-сагыз тымарěпе вăрлăхне пухас ěçре пысăк çитменлěхсем те пур-ха. Сталин ячěпе тăракан колхозра кок-сагыз тымарне пěр хут пухнă хыççăн кашни метрта 180 грамм кок-сагыз тымарě юлнă. Ку вăл кашни гектар пуçне 18 центнер кок-сагыз тымарне çухатни пулать. Ун пек çитменлěхсем ытти колхозсенче те пур. Уйрăмăнах «Осоавиахим», «Ударник», «Победа» колхозсем ку тěлěшпе начар ěçлеççě. Вěсем кок-сагыз участокěсене вăхăтра çумкурăкěсенчен тасатман, вăрлăхне тата тымарне пуçтарса илес ěçе те кая юлса тытăннă. Ленин ячěпе тăракан колхозра та 6,5 гектар çинче 1,6 килограмм кок-сагыз вăрлăхě тата 1,8 центнер кок-сагыз тымарě кăна пухса илнě. Çакă вăл хăшпěр колхоз председателěсем кок-сагыз акса тăвас ěç çине çиелтен пăхнине пěлтерет.

Кок-сагыз тымарěсене пěр грамм çухатмасăр пухса илмелле.

В. ШАДИРЯКОВ.

Выльăхсем валли—ăшă витесем

ШАХАСАН. Районри чылай колхозсем çамрăк выльăхсене тěрěс-тěкěл пăхса ўстерес, выльăх-чěрлěх тухăçлăхне хăпартас тесе тăрăшаççě, вěсем халě ăшă витесем хатěрлеме тытăнчěç. Чкалов, Киров тата Ворошилов ячěсемпе тăракан колхозсем хěле валли ферма çурчěсене юсаса çитерчěç.

«Новая жизнь» колхозра витесене юсас ěçе фермăсен заведующийě хăй ертсе пырать. Кунта ферма работникěсен вăйěпех ěне, сурăх, сысна витисене юсаççě. Йывăç витесене тул енчен тата шал енчен те тăмпа шăлса лартаççě. Вите тăррисене, урайěсемпе алăкěсене юсаççě.

Çавăн пекех ытти колхозсем те контрактациленě çамрăк выльăхсене фермăсене пухас, хěле валли ăшă витесем хатěрлес тěлěшпе тăрăшса ěçлеççě.

В. ВЕСЕЛОВ.

Колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене кулленхи ĕçре вĕрентмелле

Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетесси, вăйлă тыррăн туса илесси тата общественнăй выльăхсен йышĕпе тухăçлăхне ÿстересси колхозсене тĕрĕс ертсе пынинчен, правленисен председателĕсен хăйсене шанса панă ĕçе юратса, чăнласа тунинчен нумай килет. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхоз руководителĕсен пуçарулăхне тĕрĕслев çурăм тĕлĕшĕнчен пĕтĕм ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пыма пултармалла. Нумай колхозсенче çакăн пек ертсе пыракан кадрсем çитĕнсе çитнĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхоз производствин ертсе пыракан кадрĕсене ÿстересси çинчен йышăннă постановленин вăйĕпе пĕтĕм ĕçе çапла туса пымалла...

Çакна эпир чылай колхозсен ĕçĕнче куратпăр. Элекейка ялсоветĕнчи «Канаш» колхоза тăваттăмĕш çул ĕнтĕ В. Еремеев юлташ ертсе пырать. Вăл илхуçалăх ĕçне лайăх пĕлет, çитĕнĕ ĕçе-и ертсе пыма пĕлет. Колхозра çакă вăхăтра ытти колхозсенчен пуçласа пĕрремĕш вырăна тухать...

Çапах та ку колхоз тырпул пустарса кĕртес, сутассине тăвас ĕçре патшалăх умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçламасть. Колхоз правленин председателĕ колхозниксемпе ĕçлеме пĕлмест...

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулхи февральте каларнă постановленипе колхоз председателĕсене ертсе пыракан кадрсене ÿстерсе пымалла...

Паллах, пирĕн руководительсен ĕçне, пултарулăх, шанчăклăх çинчен партин райкомĕсем тĕплĕн пĕлмелле. Вĕсене пулăшса пыма, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăма кирлĕ.

Колхоз руководителĕ ялта чи ответлă авторитетлă çын пулма тивĕçлĕ. Унăн тивĕçлĕ авторитечĕ пур. Анчах правленисен председателĕсене çакна лайăх ăнланмалла. Ку тĕллĕшпе партине районсен парторганизацийĕсен пысăк пулăшу пама тивĕç.

М. КРАСИЛЬНИКОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ.

Йышлă çемье — пысăк телей

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указ нумай ачаллă амăшĕсене ачасем палăртнă... Указра пысăк пулăшу тата йышлă çемьесене пулăшу пама палăртнă.

Элĕ районĕнчи Карл Маркс ячĕллĕ колхозри Кудряшова тăлăх хĕрарăм... Ачисенчен пиллĕкĕшĕ фронтра пулнă. Пысăк çемье çинчен çакнашкал ывăлĕсен çырăвĕсем килсе тăраççĕ...

Хамăн тăваттăмĕш ывăл-хĕрсене пăхса ÿстерме мана колхоз пулăшнă. Советсен çĕрĕ ман ачасене вĕрентнĕ...

К. ГАБАЙДУЛЛИНА.
Комсомольски районĕ, Тогаево ялĕ.

БИБЛИОГРАФИ

„Вырăс былинисем“

Çĕрпÿ педучилищинче вĕренекен пĕр пух библиотекăра иксе вулакан кĕнеки... Чăваш кĕнеке издательстви «Вырăс былинисем» ятлă кĕнеке кăларнă. Кĕнекене вырăс халăхĕн паттăрĕсем çинчен çырнă былинăсем кĕнĕ... Вырăс халăх ача çинчен калакан былинăсене чăвашла куçарнă...

Калин паттăр — ятлă паттăр...

Паттăрсем çĕршывшăн çапăçнă...

Сăнчăра татать, нимĕç сăнчăрне,
Тимĕре татать, нимĕç тимĕрне.

Çитĕ вăхăт, былинăри пек йĕрмĕшсе ярĕ Горын çĕлен — Гитлер, йăлăнĕ вăл тархасласа:

Ан вĕлер мана эс, ан вĕлер,
Çутă куншăн эпĕ таравăт.
Туслă пулăпăр — ĕмĕр-ĕмĕр,
Эп нихçан та вĕçмĕп Рус хирне.

Çапла калать ăна хирĕç Илле Муромец:
Шăхăрайман тек çĕлен-калталла,

Улшаймăн тек йытă-кашкăра...

Çитĕ кун — тăван çĕршывăн, унăн ирĕклĕхĕ тĕлĕшĕнчен кун-çулĕсене хĕрхенмесĕр çапăçнă, паттăр ывăлĕсен ĕçĕсем...

Хăюллă çапăçусемпе, халăх творчествин майĕсемпе пĕлсе усă курни сисĕнет».

Вулама çăмăл, лайăх куçарни çÿлте илсе кăтартнă сыпăксенченех палăрать.

Аслă вырăс халăхĕн паттăрсем çинчен хывнă аваллăх юррисем тăван çĕршыва юратма, «сутă куншăн, ырă куншăн çапăçма» чĕнеççĕ, тĕнчене вăрçă вутне кĕртсе янă юнлă пусмăрçăсене — фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене пуçĕпех пĕтересшĕн кĕрешес вăй-хала ÿстерĕççĕ.

Иван МУЧИ.

Циклотрона пуçтарса майлаштарнă

Ленинградри Мухин юлташ директор пулса тăракан заводра СССР Наука академийĕн физикăпа техника институчĕ валли тунă питĕ вăйлă циклотрона пуçтарса майлаштараççĕ. Çак циклотрон Совет Союзĕнчи пĕрремĕш вăйлă циклотрон.

Циклотрон вăл — 80 тоннăна яхăн таякан питĕ пысăк прибор. Ăна атома вĕренме, унăн етрине çурма тата атом ăшĕнчи энергие вĕренме тунă. (ТАСС).

СССР медалĕсемпе Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

1944 çулхи августăн 12-мĕшĕнче Шупашкарта СССР Верховнăй Совет депутачĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланă çынсен пысăк ушкăнне Правительство наградисене пачĕ.

Правительство заданийĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртнĕшĕн «Ĕçри хастарлăхшăн» медале Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăн механикĕ И. А. Соловьев, «Ĕçре палăрнăшăн» медале военпредăн помощникĕ И. В. Жигунов юлташсем илчĕç.

Производство планне ăнăçлă пурнăçланăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене вырăнти промышленноçăн тата апат-çимĕç промышленноçĕпе ашпа сĕт промышленноçĕн, промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕн уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем тата ертсе пыракан работникĕсем илчĕç: Елчĕкри крахмалпа патока завочĕн мастерĕ Е. Д. Агеева, Шупашкарти леспромартелĕн кочегарĕ Т. Н. Анисимов, Чăвашмельтрестăн главнăй инженерĕ Г. К. Апанасов, Канашри типографин директорĕ Д. С. Бык, Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн план отделен начальникĕ Л. В. Гладышева, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăн бригадирĕ А. В. Горбунова, Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕн мастер помощникĕ К. П. Горбунова, Шупашкарти эрех комбиначĕн хатĕрлев пункчĕн заведующийĕ С. Ф. Гордеев, Мăн Шахчурари леспромартелĕн вăрман касаканĕ Н. И. Горланова, Йĕпреçри крахмалпа патока завочĕн директорĕ Г. С. Данилов, Шупашкарти «Кожупряжь» артелĕн цех заведующийĕ И. Ф. Делаков, «Чебторгин» артелĕн бригадирĕ Н. Е. Ефимов, Чăвашшвейпромсоюзăн орготдел заведующийĕ М. А. Зарубин, Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ П. К. Захватова, «Чебторгин» артелĕн ата çĕлекенĕ Л. А. Зельдин, Мăн Шахчурари леспромартелĕн председателĕ П. И. Иванов, Шупашкарти арман комбиначĕн вахтерĕ П. И. Иванов, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан артелĕн çĕвĕ çĕлекенĕсем А. А. Иванушкина тата А. И. Игнатьева, Шупашкарти индпошив мастерскойĕн бригадирĕ А. А. Иванушкина, малтан апат-çимĕç промышленность наркомĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ, халĕ ВКП(б) Обкомĕн промышленноçпа транспорт отделĕн заведующи заместителĕ П. И. Игнатьев, Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн работници А. П. Ильина, Чăваш АССР Совнаркомĕн консультанчĕ К. С. Ильин, Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн мастерĕ В. В. Ильинская, Шупашкарти выльăх-чĕрлĕх пусакан пунктăн мастерĕ Е. И. Калашникова, апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ П. И. Калинкина, Улатăр типографин директорĕ Г. И. Канов, Шупашкарти «Вышивка» артелĕн тĕрĕ тĕрлекенĕ З. И. Карамышева, Шупашкарти «Красный кустарь» артелĕн шлепкесем çĕлекенĕ П. П. Климова, Шупашкарти «Красный мебельщик» артелĕн мастерĕ Ф. И. Коновалов, Шупашкарти сăра завочĕн мастерĕ А. К. Кузьмина, малтан ВКП(б) хула комитечĕн инструкторĕ пулса ĕçленĕ, халь ВКП(б) Обкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлекен В. А. Курапина, Шупашкарти выльăх-чĕрлĕх пусакан пунктăн начальникĕ А. С. Лагутина, Шупашкарти «Кожупряжь» артелĕн закройщикĕ П. А. Лакомкин, Промысла кооперации управленийĕн главнăй бухгалтерĕ В. И. Лебедева, Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн мастерĕ А. Ф. Липнягова, Шупашкарти макарон фабрикин бригадирĕ Н. К. Малова, Шупашкарти горпромкомбинатăн слесарĕ М. Т. Маслов, Кувакино районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн производство отделĕн заведующийĕ Н. Б. Микехин, Улатăрти типографин бухгалтерĕ В. Д. Миронов, «Чебторгин» артелĕн правленийĕн председателĕ Н. С. Мицина, Шупашкарти «Вышивка» артелĕн закройщици Н. Д. Молодова, Шупашкарти «Красный мебельщик» артелĕн столярĕ А. Н. Николаев, Шупашкарти «Кожупряжь» артелĕн работници А. И. Павлова, Чăвашдревпромсоюзăн производство отделĕн начальникĕ З. П. Пономарева, Шупашкарти «Пекарь» артелĕн пекарĕ Д. Ф. Попов, Промкооперации управленийĕн уполномоченнăйĕн заместителĕ И. Ф. Риманов, Шупашкарти «Кооператор» артелĕн мастерĕ В. А. Рыбаков, Канашри апат-çимĕç комбиначĕн работници А. В. Сергеева, Красноармейскри крахмалпа патока завочĕн механикĕ Е. С. Сергеева, Шупашкарти индпошив мастерскойĕн мастерĕ М. Д. Сергеева, Чăвашдревпромсоюзăн главнăй бухгалтерĕ Е. З. Скашевская, Шупашкарти «Пекарь» артелĕн работници С. П. Скворцова, Шупашкарти типографин инструкторĕ М. Н. Солдатченко, Канашри арман комбиначĕн вальцерезчикĕ И. Ф. Стрежнев, Чăвашмельтрестăн главнăй бухгалтерĕ А. В. Титов, Елчĕкри крахмалпа патока завочĕн мастерĕ М. Т. Тихонова, Улатăрти махорка фабрикин крошильщици П. М. Тихонова, Улатăрти апат-çимĕç комбиначĕн сушильщици К. Н. Турдакова, Мăн Шахчурари леспромартелĕн вăрман касаканĕ А. З. Угарова, Шупашкарти «Кооператор» артелĕн техноракĕ С. Я. Хазеров тата Чăваш коопинсоюз президиумĕн председателĕ С. Г. Шадрин юлташсем илчĕç.

Награда илнисем хăйсен ĕçĕсене правительство пысăка хурса хакланăшăн ăна тав турĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ награда илнисене награда илнĕ ятпа саламларĕ, малалла тата пысăкрах ÿсĕмсем тума сĕнчĕ.

ИСКУССТВО ХЫПАРĔСЕМ

● Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче Шупашкарта чăвашсен художество училищи ĕçлеме пуçлать. Унта вĕренме 40 çамрăка илеççĕ. Çавăн пекех пĕлтĕр уçăлнă музыка шкулне 90 ача илме палăртнă.

● Чăвашсен филармонийĕ духовой оркестр организацилет. Музыкантсен кадрĕсене пухса çитереççĕ. РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ оркестр валли пĕр комплект инструментсем парать

● Кăçал Калинино район центрĕнче Чăвашсен академи театрĕн филиалĕ уçăлать. Филиалта ĕçлеме çынсем суйласа илнĕ. Халĕ репертуар хатĕрлеççĕ.

ТАСС опровержениЙĕ

1. Ют çĕршывсен хаçачĕсенче, уйрăмăн илсе кăтартсан — Лондонра тухакан «Ньюс кроникл» тата «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатсенче, — çакăн пек пĕлтерÿсем пичетлесе кăларнă: СССР правительстви Ватикана вăрçă хыççăнхи общество тата тĕн ыйтăвĕсене тапса панă чухне иккĕшин ĕçĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерме сĕннĕ пулать.

ТАСС çапла калама полномочи илнĕ: çавăн пек пĕлтернисем вĕсем пурте суя.

2. Юлашки кунсенче ют çĕршывсен хаçачĕсенче, Польшăн эмиграцири правительстви хаçачĕсемпе радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх тесе кăтартса, Лондонри поляк эмигранчĕсем хушнă пирки Варшавăра августăн 1-мĕшĕнче восстанисемпе çапăçусем пуçланни çинчен тата çав восстанисемпе çапăçусем халĕ те пĕтменни çинчен пĕлтерÿсем пичетлесе кăларнă. Польшăн Лондонри эмиграцири правительствин хаçачĕсемпе радиовĕ çапла тĕртсе хураççĕ: Варшавăра восстани тунă çынсем Совет командованийĕпе çыхăнса тăнă пулать, анчах совет командованийĕ вĕсене кирлĕ пек пулăшман пулать.

ТАСС çапла калама полномочи илнĕ: ют çĕршывсен хаçачĕсем çапла калани — е пĕлмен пирки калани, е Совет командованине элеклес шутпа калани пулса тăрать. ТАСС çакна лайăх пĕлет: поляксен Лондонри ушкăнĕсем, Варшавăра халь пулса иртекен ĕçсемшĕн ответлă пулса тăраканскерсем, Варшавăра мĕнле те пулсан выступлени тăвасси çинчен Совет çар командованине малтанах пĕлтерсе хума тата çав ĕç пирки Совет çар командованийĕпе килĕшме нимĕн чухлĕ те тăрăшман. Çавăнпа та Варшавăра халь пулса иртекен ĕçсемшĕн ответлăх Лондонри поляк эмигранчĕсем çине çеç ÿкет.

„Дейли уоркер“ хаçат Варшавăри „вăрттăн тунă восстани“ çинчен

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать:

«Иртнĕ эрнере Варшава хулинче сиксе тухнă восстанин сăлтавĕ (çав восстание Бур ятлă генерал ертсе пырать тесе пĕлтернĕччĕ) Лондонри чи реакциллĕ поляк çыннисем пуçласа янă политикăллă хăрушă вăййă пулса тăнă. Халь татăклăнах çакăн пек калама пулать: çав восстание Соснковский хушнипе организациленĕ. Соснковский вăл хăй те фашист евĕрлех. Соснковский Лондона Рима пырса кайнă хыççăн пынă, Ватиканра вăл Совет Союзне хирĕç тумалли ĕçсем çинчен каласма хăтланнă. Вăл, вырăссемпе те, акăлчансемпе те, американецсемпе те канашламасăрах, «восстани» тума хушнă. Хулари восстание хула тулашĕнчи çапăçу хирĕнчи ĕçсемпе килĕштермешкĕн унăн малтан Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе çыхăнмалла пулнă, анчах вăл çак ĕçе тума пĕртте тăрăшман. Çавăнпа та унăн мĕнле те пулсан пысăк çар тĕллевĕ пулмании паллах. Унăн тĕллевĕ çакă пулнă: вăл хăйне пăхăнса тăракан çынсем Хĕрлĕ Çар Варшавăна çитиччен ăна хăйсен аллине тытса илмĕ «паттăррăн тăрăшрĕç» тесе калама май тупасшăн пулнă. Вăл Варшавăна ирĕке кăларасси Хĕрлĕ Çарăн тата Варшава тулашĕнчипе Варшавăри поляксен, Хĕрлĕ Çарпа таччăн çыхăнса кĕрешнĕскерсен, ĕçĕ пулассине ăнланса илтересшĕн мар пулнă пулмалла. Вăл хăй ертсе пыракан руководительсен шайккине Варшавăра «мĕн те пулсан тума» хушнă курăнать. Руководительсен çав шайкки вара унăн приказĕсене пăхăннă.

Çакна пула Варшавăри ырă кăмăллă темиçе пин арçынпа хĕрарăм, паллах ĕнтĕ, чăн-чăн восстани тума вăхăт çитрĕ пуль тесе шухăшланă, çак вăхăт пирки Варшава çывăхне хĕвелтухăç енчен пырса тăнă Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕмпех калаçса татăлнă пуль тесе шухăшланă. Çав çынсем вара чăнах та восстани тунă, вĕсем, йывăр çухатусем тÿссе, çапăçма хăтланнă... Енер каçхине Соснковскин юлташĕ Квапинский çапла каланă: халь союзниксем восстани тăвакансене пулăшма вăйсем янă, тенĕ. Çапла калани çав тери ăссăр приказсем пани çынсене йĕрĕнтернине пăртак та пулин çемçетес тесе юлашки хут тăрăшни пулать, тесе шутлаççĕ Лондонра.

Американецсен обозревателĕ Варшавăри „восстани“ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен радиопа ăнлантарса паракан паллă çынни Стил çапла каланă:

«Поляксен эмиграцири правительстви политикăллă пĕр питĕ усал маневршăн айăплă: вăл Варшава хулинче вăрттăн ĕçлесе тăракан поляксене, алла хĕçпăшал тытса, нимĕçсене хирĕç тухма хушнă. Çапла поляксен Лондонри ушкăнĕ вăхăтсăр восстани тума приказ панă. Çапла хăтланса, вăл пĕртен-пĕр тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн пулнă; çав тĕллев вăл — восстани кăларса, поляксен Лондонри ушкăнĕн ырă ятне Америкăпа Англире çирĕплетесси пулнă. Соснковский, Андерс тата вĕсемпе пĕр каварлисем ыттисем те çак приказшăн ответ тытма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем темĕн чухлĕ юн юхтарса, халăха пĕтмелле тунă. Вĕсене халех тĕнчери халăхсен çар трибуналне суда пама тивĕç. Çак трибунал США, Англи, СССР тата Польша представителĕсенчен тămalla».

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Луара шывĕ урлă каçнă та Нант хулинчен 10 миля кăнтăртарахра ларакан пункта çитнĕ. Нант хулипе Анжер хули районĕсенче пĕчĕк çапăçусем пыраççĕ. Бретань çурутравĕнче тăшман Сен-Мало хулинчи тĕреклетнĕ юлашки пунктăн пĕчĕк пайне çаплах хăй аллинче тытса тăрать-ха. Динар хулинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Брест хулипе Лориан хулинче лару-тăру улшăнман.

Нормандире Мортэн—Вир секторĕнче тăшман çаплах хытă çапăçать. Мортэн хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем атакăсем тунине нимĕçсен бронетанковăй чаçĕсем хытă хирĕç тăраççĕ. Кунтан кăштах çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем, Гатемо хулинчен иртсе кайса, Гатемо хулипе Таншебрэ хули хушшинчи шоссе çулĕ çинче ларакан Ванжон хули патнелле пынă. Вир хулинчен кăнтăртарахра союзниксем çĕнĕ территори туртса илнĕ. Тюри-Аркур тата Сен-Мартен-де-Саллен пункчĕсене тăшмантан тасатнă. Вимон хулинче çаплах çапăçусем пыраççĕ.

Августăн 9-мĕшĕнче пĕр талăк хушшинче хĕвеланăç енчи секторсенче, пуринчен те ытларах Бретань çурутравĕнче, 4.822 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Енер союзниксен йывăр бомбардировочнăй авиацийĕн йышлă соединенийĕсем активлă çапăçнă».

* * *

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ августăн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Кан хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Орн шывĕпе Лээ шывĕ хушшинчи районра пĕрлешнĕ. Лээ шывĕ çинчи Бретвиль хулинчен тухса Барбери урлă наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Мулин хули патне çитнĕ. Орн шывĕ çинчи плацдармран наступлени пуçласа янă тепĕр колонна Буа-Альба пунктне туртса илнĕ. Сен-Сильвен районĕнче августăн 12-мĕшĕнче кунĕпех çапăçнă, кунта тăшманăн йышлă контратакисене пурне те сирсе янă та пысăках мар çитĕнÿсем тунă. Вир хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем пĕр миля малалла кайнă, тăшман самаях хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Вир районĕнче кăнтăр-хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсене хирĕç тăшман малтанхи пекех вăйлă çапăçайман. Союзниксен патрулĕсем Вир хулипе Мортэн хули хушшинчи секторта Сурдеваль патне çитнĕ. Мортэн хулине каллех пирĕн çарсем йышăннă. Анчах та хулапа юнашар ялсенче тăшман халĕ те хытă хирĕç тăрать-ха.

Бретань çурутравĕнче пирĕн çарсем Сен-Мало хулинчи çирĕплетнĕ вырăна атакăлаççĕ, кунта тăшман гарнизонĕн юлашки вăйĕсем халĕ те хирĕç тăма пăрахман-ха. Динар хулинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Брест хули районĕнче хуларан çурçĕртерехре тăшман тĕллĕн-тĕллĕн контратакăсем тунă, ку контратакăсене пурне те сирсе янă. Лориан хули районĕнче лару-тăру улшăнман. Луара шывĕн улăхĕнче Анжер хулине тăшман çарĕсен юлашкийĕсенчен тасатаççĕ. Анжер хули пирĕн аллăра.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕМ ФЛОРЕНЦИ ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 8-мĕш арми чаçĕсем Чезано шывĕ урлă каçнă хыççăн Итали фронтĕнче пĕтĕм тăршшĕпех патрульсем кăна кĕрешнĕ.

Августăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Югослави çыранĕсем патĕнче «Коммандос» отрячĕ Керсо утравĕпе Луссино утравне çыхăнтарса тăракан кĕпере ишнĕ. Çак операцире тăшман салтакĕсене тыткăна илнĕ.

Енер, çанталăк начар тăнă пирки, союзниксен авиацийĕ вăйлă кĕрешме пултарайман.

ЛОНДОН, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксем Флоренци хулине йышăннă. Кĕçнерникун каçхине нимĕçсем хăйсен çарĕсене пĕтĕмĕшпех тенĕ пекех Флоренцирен кăларса, Муньоне каналĕнчен çурçĕрелле илсе кайнă. Çак канал Флоренци хулипе юнашар ларакан ялсенчен çурçĕртерехре выртать.

ЛОНДОН августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци хулине кĕнĕ акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Арно шывĕн кăнтăр хĕрринче тăраççĕ-ха. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Енер союзниксен йывăр бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Кăнтăр Францири тата Çурçĕр Италири çар сооруженийĕсене тапăннă. Союзниксен тактика авиацийĕ нумай районсенче çапăçнă, самолетсем тăшманăн çапăçу районĕнчи, Çурçĕр Италири, Кăнтăр Францири тата Югославири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра çапнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсен соединенийĕ Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

Августăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Германин Брауншвейг хулипе Рюссельгейм хулине тапăннă. Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Çурçĕр Францири тĕрлĕ объектсене атакăланă. Американецсен Европăри стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: ĕнер Америка авиацийĕн пысăк соединенийĕсем нимĕçсен Çурçĕр Францири аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Мец хулинчи сортировка станцине атакăланă. Пĕтĕмпе 6 аэродром çине бомбăсем пăрахнă.

ПОЗНАНЬРЕ УКРЕПЛЕНИСЕМ ТУМА МОБИЛИЗАЦИЛЕНĔ ХАЛĂХ ХУМХАННИ

СТОКГОЛЬМ, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Познаньре Гитлер влаçĕсем укреплениссем тума мобилизациленĕ халăхпа Гитлер партийĕн чиновникĕсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Кунти хумханусене пусарса лартма нимĕçсем эсэсовецсен отрячĕсене чĕнсе килнĕ. Укреплениссем тума мобилизациленĕ поляксем нумайĕшĕ партизансен ретне тăнă.

КĔСКЕН

Гитлеровецсем Познаньпе Данциг халăхне укрепленисем тума мобилиацилени çинчен пĕлтернĕ. 15 çултан пуçласа 65 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене пурне те мобилизацилеççĕ. Халăх çав районсенчен тарма ан пултартăр тесе, гражданла халăха чугун çулсемпе çÿреме чарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР Наркомлесĕн Улатăрти вăрман техникумĕ вăрман хуçалăхĕ тата вăрман транспорчĕ отделенийĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум вăрман хуçалăхĕн техникĕсене тата вăрманти механизациленĕ çулсене тума, юсама тата вĕсемпе усă курма пĕлекен техниксене вĕрентсе кăларать.

Техникумра 4 çул вĕренмелле. Техникума 12 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен вырăс чĕлхипе, литературипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе экзамен тытмалла. Çиччĕмĕш класран 1943-мĕшпе 1944-мĕш çулсенче отлично вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене тата ытти техникумсен 1-мĕш курсĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: а) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне, копине мар); б) хăçан, ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство (свидетельствине хăйне); в) автобиографи; г) виçĕ фотокарточка; д) çар служби тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна военнообязаннăйсен ямалла); е) сывлăх çинчен калакан справка.

Заявленире мĕнле отделенире вĕренесшĕн пулнине те кăтартмалла.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.

Лайăх вĕренекенсене стипенди параççĕ: 1-мĕш курсра — 80 тенкĕ, 2-мĕш курсра — 100 тенкĕ, 3-мĕш курсра — 120 тенкĕ, 4-мĕш курсра — 140 тенкĕ. Пур предметсемпе те отлично вĕренекеннисене 25 процент ытларах параççĕ.

Техникумăн общежити, столовăй тата подсобнăй хуçалăх пур.

Адрес: г. Алатырь, ул. Ленина, 20, Лесотехникум.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсĕсене вĕренме илет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературипе экзамен лайăх панисене илеççĕ. 1943—44 çулсенче вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене экзаменсĕрех илеççĕ.

Заявленипе пĕрле ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан документ (документне хăйне, копине мар) тата автобиографи ямалла.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзамен сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен пырать.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут, Приемная комиссия.

Шупашкарти пир-авăр фабрикине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: платниксем, малярсем, штукатурсем, подсобнăй рабочисем, пир-авăр тĕртес ĕçе вĕренекен учениксем, банкоброшницăсем, холстовщицăсем, ленточницăсем, браковщицăсем, слесарьсем, охранниксем, пожарниксем, табельщиксем тата курьерсем.

Строительство отделĕпе охрана рабочийĕсене общежити параççĕ. Фабрикăн столовăй тата çăкăр ларекĕ пур. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Володарского, Дом печати, 2-й этаж.

Чăвашсен ялхуçалăх институтне çакăн пек работниксем кирлĕ: старши лаборантсем (аслă шкултан е специальнăй вăтам шкултан вĕренсе тухнисем); лаборантсем — чĕрчунсен физиологийĕ кафедрине, çĕр ĕçĕпе тăпрана вĕренекен кафедрăна; ассистентсем—хими кафедрине, ÿсен-тăрансене хÿтĕлес ыйтупа ĕçлекен кафедрăна, механизаци ыйтăвĕпе ĕçлекен кафедрăна; слесарь, старши лаборант, главнăй бухгалтер, завхоз.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
августăн 13-мĕшĕнчен пуçласа
КУНСЕРЕНЕХ
«аслă илемлĕ çĕнĕ фильм
«ЗЛАТЫЕ ГОРЫ»
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетренех ĕçлеме тытăнать.

Чăвашстройтрестăн ОРС-ĕпе ытти предприятийĕсене çакăн пек работниксем кирлĕ: столовăйра тата магазинра ĕçлекенсем, бухгалтерсем, экономистсем, инженерсем, техниксем, ОРС начальникĕн заместителĕ, тĕрлĕ профессиллĕ рабочисем-строительсем. Рабочисемпе служащисем валли столовăй пур, вĕсене ОРС магазинĕнче карточкăсемпе продуктсем параççĕ, хваттер параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная Площадь, 7.

Совет Союзĕн Уполнаркомзагĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне çакăн пек работниксем кирлĕ: машинистка, делопроизводитель, инструктор-контролерсем, экономистсем, агрономсем, бухгалтер-ревизорсем, шофер, конюх. Ĕçукçине калаçса татăлнă тăрăх тÿлеççĕ. Кадр отделĕнчен ыйтса пĕлмелле.

Буинск станцийĕнчен икĕ лаша çухалнă. Пĕрин паллисем çаксем: ячĕ—«Бабушка», кĕсре, 1940 çулта çуралнă, тĕсĕ—турă, çÿллĕшĕ 137 сантиметр, çилхи сылтăм енче, хушка. Теприн паллисем çаксем: ячĕ—«Ярка», кĕсре, 1933 çулта çуралнă, тĕсĕ—хура, çÿллĕшĕ 139 см., çилхи сылтăм енче.

Çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: п./од. Каранъялы, Октябрьского района, Перво-Чурашевский колхоз «Звезда».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00634 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. Тираж 16.000 экз.